26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1943
НОЯБРЬ
17
ЮНКУН
228(6405) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Еçсынни депутачĕсен райсовет исполкомĕсем тата ВКП(б) райкомĕсем тăратнă тăрăх, уборка вăхăтĕнче тухăçлăн тата лайăх ĕçленĕшĕн, государствăна тырă парса татнăшăн ялхуçалăхĕнче малта пыракансен республикăри Хисеп хăми çине çак колхозсене кĕртнĕ:

58. Советски районри **«За коммунизм» колхоз** (колхоз председателĕ **Григорьев** юлташ, комсомол организацийĕн секретарĕ **Матвеев** юлташ). Тырă вырас, авăн çапас тата кĕрхи çĕртме тăвас ĕçсене йĕркеллĕн туса ирттернĕ. Патшалăха тырă тата ытти ялхуçалăх продукчĕсем срокчен парса татнă. 1944-мĕш çулшăн аванс шучĕпе 17 центнер тырă панă.

59. Советски районри **«Радио» колхоз** (колхоз председателĕ **Чаганов юлташ**). Ку колхоз тырра вăхăтра пуçтарса тата çапса пĕтернĕ. Патшалăха тырă парса татнă. 1944-мĕш çулшăн аванс шучĕпе 22 центнер тырă панă.

60. Советски районри **«Броневик» колхоз** (колхоз председателĕ **Андреев** юлташ, комсомолăн пуçламĕш организацийĕн секретарĕ **Маркова** юлташ). Ку колхоз тырра ăнăçлăн вырса тата çапса пĕтернĕ. Патшалăха тырă тата выльăх продукчĕсем парса татнă. 1944-мĕш çулшăн 18 центнер тырă панă.

61. Советски районри **«Ыраш» колхоз** (колхоз председателĕ **Сергеев** юлташ). Колхоз тырă вырса пухас ĕçе тата кĕрхи çĕртме тăвас ĕçе йĕркеллĕн туса ирттернĕ. Патшалăха ялхуçалăх продукчĕсем парса татнă.

62. Çĕмĕрле районĕнчи **«Комбайн» колхоз** (колхоз председателĕ **Осипов** юлташ). Колхоз тырă вырас, кĕлтесене капана хывас, авăн çапас ĕçсене вăхăтра туса пĕтернĕ, государствăна тырă срокчен парса татнă тата 1944-мĕш çулшăн аванс шучĕпе 100 центнер тырă панă. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана пур йышши выльăхсем тĕлĕшпе те пурнăçланă, выльăх витисене хĕле хатĕрлесе çитернĕ.

63. Çĕмĕрле районĕнчи **Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз** (колхоз председателĕ **Ежов** юлташ). Колхоз тырă вырас, кĕлтесене капана хывас тата авăн çапас ĕçсене ăнăçлăн туса пĕтернĕ. Государствăна тырă срокчен парса татнă тата 1944-мĕш çулшăн аванс шучĕпе 20 центнер тырă панă. Октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне кĕрхи çĕртме туса пĕтернĕ. Тухăçлă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана пурнăçланă.

64. Çĕмĕрле районĕнчи **«1-ое Мая» колхоз** (колхоз председателĕ **Чекменева** юлташ). Ку колхоз тырă вырас, кĕлтесене капана хывас тата авăн çапас ĕçсене вăхăтра туса пĕтернĕ. Государствăна тырă срокчен парса татнă. Октябрĕн 15-мĕшĕ тĕлне кĕрхи çĕртме туса пĕтернĕ.

65. Çĕмĕрле районĕнчи **Ленин ячĕпе тăракан колхоз** (колхоз председателĕ **Яковлев** юлташ, комсорг **Семенова** юлташ). Ку колхоз вăхăтра тырă вырса, авăн çапса пĕтернĕ, государствăна тырă парса татнă, кĕрхи çĕртме туса пĕтернĕ.

66. Çĕмĕрле районĕнчи **«Большевик» колхоз** (колхоз председателĕ **Стафик** юлташ). Колхоз тырă вырас, кĕлтесене капана хывас тата авăн çапас ĕçсене ăнăçлăн туса пĕтернĕ. Государствăна тырă срокчен парса татнă тата 1941-мĕш çулшăн аванс шучĕпе 25 центнер тырă панă.

Чăваш АССР Совнаркомĕнче

Вырăнти промышленность предприятийĕсен, промысла тата инвалидсен кооператци артелĕсен социализмлă ăмăртăвĕн 1943 çулхи октябрь уйăхĕнчи итогĕсем çинчен

Чăваш АССР Совнаркомĕ вырăнти промышленность предприятийĕсен, промысла тата инвалидсен кооператци артелĕсен социализмлă ăмăртăвĕн 1943 çулхи октябрь уйăхĕнчи итогĕсене пăхса тухса, çапла йышăннă:

Вырăнти промышленность тăрăх

Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне Шăхасанти райпромкомбинатрах (управляющийĕ Платонов, райсовет исполкомĕн председателĕ Скворцов юлташсем) хăвармалла тунă тата ăна 15.000 тенкĕ укçа парса премилемелле тунă.

Канашри горпромкомбината ăмăртура палăрнă работниксене премилеме 10.000 тенкĕ, Тăвайри райпромкомбината 5.000 тенкĕ укçа панă.

Октябрь уйăхĕнче Йĕпреçри, Калининăри, Комсомольскинчи, Куакинăри, Сĕнтĕрвăрринчи, Советскинчи, Сĕнтĕрти, Вăрмарти, Шăмăршăри, Çĕмĕрлери, Çĕрпӳри, Етĕрнери, Елчĕкри промкомбинатсем лайăх ĕçлениие палăртнă.

Промысла кооператци тăрăх

Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне Канашри «Авангард» артельтех (председателĕ **Васильев**, Канаш хула совет исполкомĕн председателĕ Белоусов юлташсем) хăвармалла тата ăмăртура мала тухнă работниксене премилеме 15.000 тенкĕ укçа памалла тунă.

Октябрьски районри Караньялĕнчи «Труд» артеле 10.000 тенкĕ, Шупашкарти «Вышевка» артеле 5.000 тенкĕ, Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Новинскри «Кооператор» артеле 5.000 тенкĕ укçа парса премилемелле тунă.

Октябрь уйăхĕнче Шупашкарти «Кооператор», Çĕрпӳ районĕнчи Апаккассинчи тата Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Астакассинчи артельсем лайăх ĕçленине палăртнă.

Инвалидсен кооперацийĕ тăрăх

Чăваш АССР Совнаркомĕн Хĕрлĕ ялавне Канашри «Красный воин» артеле (председателĕ Корчагин) памалла тунă тата ăна работниксене премилеме 15.000 тенкĕ укçа памалла тунă.

Чаганарти «Красный стрелок» артеле ăмăртура палăрнă работниксене премилеме 10.000 тенкĕ укçа панă.

Октябрь уйăхĕнче Çĕмĕрлери «Партизан», Сĕнтĕрвăрринчи «Социализм» артельсем лайăх ĕçленине палăртнă.

Вырăнти топливо промышленность предприятийĕсен социализмлă ăмăртăвĕн 1943 çулхи октябрь уйăхĕнчи итогĕсем çинчен

Чăваш АССР Совнаркомĕн вырăнти топливо промышленность предприятийĕсен социализмлă ăмăртăвĕн октябрь уйăхĕнчи итогĕсене пăхса тухса, вырăнти топливо промышленность Управленийĕн Канашри, Вăрмарти, Советскинчи тата Элĕкри вăрманпромхозĕсем мала тухнă тесе йышăннă.

Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне Шупашкарти вăрманпромхозран илсе Канашри вăрманпромхоза (директорĕ Лопин, хула совет исполкомĕн председателĕ Белоусов юлташсем) памалла тунă тата ăна ăмăртура палăрнă работниксене премилеме 20.000 тенкĕ панă.

Вăрмарти леспромхоза (директорĕ Баданов, райсовет исполкомĕн председателĕ Биктимиров юлташсем) ăмăртура палăрнă работниксене премилеме 15.000 тенкĕ памалла тунă.

Элĕкри вăрманпромхоза (директорĕ Волков, райсовет исполкомĕн председателĕ Филимонов юлташсем) тата Советскинчи вăрманпромхоза (директорĕ Усов, райсовет исполкомĕн председателĕ Малинин юлташсем) кашнине иккĕмĕш преми — 10-шар пин тенкĕ памалла тунă.

Октябрь уйăхĕнче вутă хатĕрлесе турттарас тĕлĕшпе Красноармейски, Сĕнтĕр, Шăхасан тата Елчĕк вăрманпромхозĕсем лайăх ĕçленине палăртнă.

Совет Информаци Бюровĕнчен

НОЯБРĔН 15-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Ноябрĕн 15-мĕшĕнче пирĕн çарсем КОРОСТЕНЬ хули енче Киев облаçĕнчи КАГАНОВИЧ (ХАБНОЕ) ятлă район центрне, Житомир облаçĕнчи БАЗАР ятлă район центрне тытса илнĕ. Çавăн пекех тата халăх пурăнакан ытти 40 пункта ытла йышăнса илнĕ, вĕсен шутĕнче МАРЬЯНОВКА, ЯБЛОНКА, РАГОВКА, РУДНЯ ОСУШНЯ, БОЛЬШИЕ МИНКИ, НЕДАШКИ, САВЛУКИ, КСАВЕРОВ, СКУРАТЫ, ВЛАДОВКА, ЮЗЕФОВКА ятлă пысăк ялсем пур.

ФАСТОВ хулинчен хĕвеланăçнерехри тата ЖИТОМИР хулинчен кăнтăр-хĕвелтухăçнерехри районсенче пирĕн çарсем тăшман пехотипе танкĕсен пысăк вăйĕсем тунă контратакăсене сире-сире янă.

РЕЧИЦЫ хулинчен кăнтăртарахра тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем, тăшман хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкса, тăшман оборонин вăйлă тĕреклетнĕ КРАСНОСЕЛЬЕ, ХРАБРЫЙ, РОВНОЕ, КОРОСТАНЬ, ПОДМОСТЬЕ, ДЕМЕХИ, МОЛЧАНЫ, КАПОРОВКА, БУДКА, АНДРЕЕВКА, РОМАНОВКА, ОСИПОВКА, УДАЛЕВКА, ТИХОНОВКА ятлă пункчĕсене тата ДЕМЕХИ ятлă чугун çул станцине тытса илнĕ. Çапла вара, ГОМЕЛЬ хулипе КАЛИНКОВИЧИ хушшинчи чугун çулпа шоссе çулне татса пăрахнă. Çапăçусенче тăшмана çынсемпе техника тĕлĕшĕнчен питĕ пысăк çухату кӳнĕ.

КЕРЧЬ çурутравĕ çинче пирĕн çарсем малтанхи районсенчех плацдармсене аслăлатасшăн çапăçнă.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведка тунă тата тăшмана хирĕç артиллерипе миномётсенчен персе тăнă.

Ноябрĕн 14-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 114 танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата çӳлелле перекен артиллери тăшманăн 19 самолетне персе ӳкернĕ.

☆ ☆ ☆

Коростень хули енче пирĕн çарсем, тăшман хирĕç тăнине çĕнтерсе пырса, Житомир облаçĕнчи Базар ятлă район центрне, çавăн пекех тата Киев облаçĕнчи Каганович (Хабное) ятлă район центрне тытса илнĕ. Пĕр участокра нимĕçсем, совет çарĕсем малалла куçнине чарма хăтланса, контратака тунă. Çав çапăçура пирĕн чаçсем тăшмана пысăк çухату кӳнĕ, тăшмана каялла чакма лекнĕ. Чакакан гитлеровецсене хăваласа пырса, совет боецĕсем халăх пурăнакан чылай пунктсене тытса илнĕ. Тăшмантан 12 тупă, 22 миномет, 80 пулемет, боеприпассен 2 складне, тырпул тата саперла пурлăх склачĕсене тытса илнĕ. Çапăçу хирĕнче тăшманăн салтакĕсемпе офицерĕсен 800 вилли ытла выртса юлнă.

* * *

Фастов хулинчен хĕвеланăçнерехри тата Житомир хулинчен кăнтăр-хĕвелтухăçнерехри районра пирĕн çарсем тăшманăн пехотипе танкĕсен пысăк вăйĕсем тунă контратакăсене сире-сире янă. Пĕр участокра совет артиллеристĕсем нимĕçсен 30 танкне персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă. Тепĕр участокра совет танкисчĕсем контратака тунă тăшмана каялла ывăтса янă, çапăçу хирĕнче гитлеровецсен персе çĕмĕрнĕ 6 танкĕ тăрса юлнă тата нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсен 500 вилли ытла выртса юлнă.

Пирĕн авиаци тăшманăн пĕр çĕре пухăнса тăнă танкĕсемпе мотопехотине пыра-пыра çапнă. Нимĕçсен 19 танкне пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, 80 автомашинине тата чугун çул эшелонне çĕмĕрнĕ.

* * *

Керчь çурутравĕ çинче плацдармсене аслăлатасшăн çапăçнă. Керчь хулинчен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре пĕр чаçри боецсем тăшмана атакăланă та хаяррăн çапăçнă хыççăн ăна траншейăсенчен çапса кăларнă. Çапăçу хирĕнче нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсен 300 виллине çити выртса юлнă. Пирĕннисем трофейăсем тытса илнĕ. Тыткăна илнисем пур. Нимĕçсем, хăйсен Колонка ятлă тĕреклĕ пункт районĕнче çухатнă позицийĕсене каялла туртса илме хăтланса, темиçе контратака тунă. Тăшманăн контратакисене пурне те сирсе янă, тăшмана пысăк çухату кӳнĕ.

Пирĕн летчиксем сывлăшри çапăçусенче нимĕçсен 12 самолетне персе ӳкернĕ.

* * *

Речицы хулинчен кăнтăртарахра тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре, Днепр шывĕн сылтăм енче, пирĕн çарсем тăшман оборонин вăйлă çирĕплетнĕ темиçе пунктне тытса илнĕ. Нимĕçсем ку участока резервсем илсе пынă. Анчах та пирĕн çарсем наступлени туса пынине нимĕçсем чарма пултарайман. Пирĕн çарсем, малалла куçса пырса, Речицăран хĕвеланăçнерехри Демехи ятлă чугун çул станцине тытса илнĕ, çапла вара Гомель хулипе Калинковичи хушшинчи чугун çула тата шоссе çулне татса пăрахнă. Иртнĕ кун хушшинче нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 3.000 çынна çити вĕлерсе пĕтернĕ тата тăшманăн 40 танкне пĕтерсе тăкнă. Нимĕçсенчен юсавлă 27 танк, 32 хир туппи, хăй тĕллĕн çӳрекен 7 тупă, 477 грузовой машина, 8 çăмăл машина, бензин склачĕ, боеприпассен 9 складне, 12 радиостанци тата ытти çар пурлăхĕ те тытса илнĕ. Нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене чылай тыткăна илнĕ.

* * *

Хура тинĕсре тăшманăн 1.500 тонна таякан суднине шыва путарнă.

* * *

Витебск облаçĕнче кĕрешекен партизансен пĕрлешнĕ темиçе отрячĕ юлашки вăхăтра нимĕçсен 14 ялти гарнизонне аркатса тăкнă. Совет патриочĕсем 5 танк, 34 автомашина, боеприпассен, апат-çимĕçĕн тата горючин 11 складне сирпĕнтерсе çунтарса янă. Çавăн чухне пулса иртнĕ çапăçусенче партизансем 400 гитлеровеца çити пĕтерсе тăкнă. Нимĕçсенчен 28 пулемет, 12 миномет тата 300 винтовка ытла тытса илнĕ.

* * *

Нимĕçсен 23-мĕш танковăй дивизийĕнчен Хĕрлĕ Çар енне куçнă лейтенант Вильгельм Н. çапла каласа кăтартнă: «Юлашки çапăçусенче 23-мĕш дивизи калама çук пысăк çухату тӳсрĕ. Нумаях пулмасть çĕнĕрен тунă 128-мĕш моторизованнăй полкра халĕ мĕн пурĕ те 200 çын кăна тăрса юлнă. 128-мĕш артиллери полкĕнче унтан та сахалтарах тăрса юлнă. Пĕр станцире вырăссем пирĕн танксемпе тупăсене тытса илчĕç, вăл тупăсемпе танксене халь анчах Германирен кунти çухатусене витме илсе килнĕччĕ. Салтаксемпе офицерсем нумайĕшĕ тотальнăй мобилизаци ăнăçлăн пуласса ĕненетчĕç. Халĕ ĕнтĕ кашни ăслă-пуçлă çын çакна лайăх пĕлет: тотальнăй мобилизаци нимĕçсене ним те памарĕ. Тотальнăй мобилизацие хĕл кунĕсенче туса ирттерчĕç. Унтанпа вара Германин вăрçăри лару-тăрăвĕ лайăхланма мар, питĕ хытă начарланчĕ. Вырăссем нимĕçсене Орел хулинчен, Брянскран, Донбасран çапса кăларчĕç, Украинăн пысăк пайне каялла туртса илчĕç. Нимĕç çарĕ çырманалла йăванса пырать. Пĕтес вăхăта пăртак тăсма пулать-ха, анчах та пĕтессине сирсе яма нимĕнле май та çук».

* * *

Запорожье облаçĕнчи Луганск ялĕнчи çынсем нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем тунă тискер ĕçсем çинчен акт çырнă. Актра çапла каланă: «Хăйсем пуç пулса пурăннă вăхăтра нимĕç захватчикĕсем мĕнпур колхоз пурлăхне çаратса пĕтерчĕç. Ялти мирлĕ халăхран оккупантсем кашни утăмрах мăшкăлласа кулатчĕç, пире хĕсĕрлетчĕç, ĕçе тухманшăн е кая юлса тухнăшăн нимĕçсем колхозниксене хĕнетчĕç, нӳхрепсене хупса лартатчĕç. Каялла чакма пуçласан, фашистла чуниленсем çуртран çурта çӳресе мĕнпур тумтире, урана тăхăнмаллисене, хаклă япаласене хăйсемпе илсе кайрĕç, чашăк-тирĕксене тата сĕтел-пукансене çĕмĕрсе пĕтерчĕç. Çапла çаратнă хыççăн нимĕçсем яла вут тĕртсе ячĕç. Пушарта 46 кил, пĕтĕм хуçалăх хуралтисемпе пĕрле, шкул, колхоз правленин çуртĕ тата ытти çуртсем те çунса кайрĕç. Гитлеровецсем, перçе пăрахассипе хăратса, пĕтĕм халăха нимĕçсен тылне кайма хушрĕç. Ялти çынсем Хĕрлĕ Çар çывхарса килнине пĕлсен, çырма-çатрасенче, шăтăксенче пытанса пĕтрĕç, çапла вара фашистла пусмăртан çăлăнса юлчĕç». Акт çине алă пуснă: зоотехник Анимисова, колхозниксем А. Швыдкий, Т. Тарасенко, А. Сугрун тата ыттисем те.

Совет патриотнисем аманнă боецсемшĕн тăрăшаççĕ

Туркестан — Çĕпĕр чугун çулĕн Луговая станцинче ĕçлекенсен арăмĕсем иккĕмĕш çул ĕнтĕ патриотла пысăк ĕç тăваççĕ. Вĕсем чугун çул çинче ĕçлекенсем уйăрса хунă продуктсенчен аманнă боецсем валли тутлă апатсем пĕçереççĕ те, аманнă боецсене илсе каякан поездсем патне улшăна-улшăна тухса, вĕсене тутлă апат çитереççĕ.

М. В. Фрунзе пурăннă çуртра-музейре

Киргизсен тĕп хулин — Фрунзе хулин варринче пысăках мар çурт ларать. Унта кашни кунах республикăри тата совет çĕршывĕн ытти кĕтессисенчен килнĕ темиçе çĕр çын кĕрсе курать. Çак çуртра чаплă полководец пĕчĕккĕ чухне пурăннă. Музей пӳлĕмĕсенче килти пурнăçра тыткаланă япаласене, кĕнекесене, Хĕрлĕ Çара тунă çынсенчен пĕрин революциллĕ ĕçĕсене кăтартакан документсене вырнаçтарнă. Октябрĕн 31-мĕшĕнче Михаил Васильевич вилни 28 çул тултарнă тĕле музее татах çĕнĕ япаласем илсе пынă. Вĕсем хушшинче Любимов художник тунă «Фрунзе Сталин патĕнче» ятлă картина чи паллăраххи пулса тăрать.

Музей çумĕнче М. В. Фрунзен халь нимĕç захватчикĕсемпе пыракан çапăçура чапа тухнă ывăлĕ çинчен, Совет Союзĕн Геройĕ Тимур синчен уйрăм отдел тунă. (ТАСС)

Патриотизмлă çĕкленӳ

ШАХАСАН. (**Хамăр корр.**). Октябрь уйăхĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва хутшăнса, промкомбинат коллективĕ çулталăкри плана 124 процент тултарчĕ. Сталин юлташ ноябрĕн 6-мĕшĕнче тунă историллĕ доклада сӳтсе-явнă хыççăн производствăллă активлăх тата та çĕкленчĕ.

Стахановец Николай Никифоров халиччен 5 кунта пĕр çуна тунă пулсан, халĕ вара висĕ кунта пĕр çуна тăвать. Çапла вăл нормăна 160 процент тултарать.

Хăйĕн ĕçĕсем çинчен Никифоров çапла калать:

— Промкомбинат управленийĕ пире ĕçлеме кирлĕ инструментсемпе материалсене çителĕклĕ таран тăратать. Апла пулсан, ĕç вăхăчĕпе тулли усă курни çеç кирлĕ. Ĕç çине ӳрĕк-сӳрĕккĕн пăхсан е тата ĕç вăхăтĕнче унта-кунта çӳресен, паллах, тухăçлă ĕçлейместĕн. Манăн йăла çапла: ĕçе тума тытăнатăп та, ăна туса пĕтермесĕр те чарăнмастăп. Пĕр ĕçе ăнăçлăн туса пĕтернĕ хыççăн теприне вара татах та лайăхрах, хăвăртрах туса пĕтерес килет.

Николай Никифоровăн опычĕсемпе кунта пурте интересленеççĕ. Ун меслечĕпе ĕçлекен Герасимов юлташ та юлашки вăхăтсенче кашни тăватă кун хушшинче пĕр çуна туса кăларма пуçларĕ. Халиччен вăл уйăхра та 4—5 çуна çеç тунă. Çавăн пекех тимĕрçĕ П. Никитинпа тир тăвакан А. Семенов юлташсем уйăхри нормăна 150—172 процент таран тултараççĕ.

Промкомбинатра ĕçлекенсем çĕнĕ ĕçсене хăнăхса пыраççĕ. Юлашки вăхăтсенче кунта çĕлĕксемпе атăсем тата тумтирсем çĕлеме, урапа сĕрмелли маçсем юхтарма, супăнь тума пуçларĕç. Супăнь тăвакансем: М. Васильевăпа А. Николаева, хăйсен ĕçне çине тăрса вĕренсе пынипе, октябрь уйăхĕнчи плана ирттерсе тултарчĕç.

Промкомбинатра кадрсем хатĕрлес тĕлĕшпе çине тăрса ĕçлеççĕ. Юлашки уйăхра кăна 16 çын вĕрентсе хатĕрленĕ. Вĕсем халĕ нормăна тултарса пыраççĕ.

Ст. АСЛАН.

Комсомолец ертсе пыракан колхозра

ÇĔРПӲ. Комсомолец И. Васильев юлташа фронтран аманса таврăннă хыççăнах «Балтиец» колхоз председательне суйларĕç. Вăлах колхозри комсомол организацин секретарĕ пулса ĕçлет. Вăл ертсе пыракан колхоз кăçал лайăх ĕçлерĕ. Кăçалхи çулшăн патшалăха тырă парса татса килес çулшăн 32 центнер тырă. 9,5 килограмм какай панă. Фермăсем пур тĕрлĕ выльăхсем енĕпе те плана ытлашшипех тултарнă. Комсомолецсен бригади çак кунсенче сысна ферминче кухня туса пĕтерчĕ. Комсомолецсем пуçарнипе колхоз 1 гектар улмуççи йываççисем лартса çĕнĕ сад турĕ, кĕрхи çĕртме планне ăнăçлăн пурнăçларĕ.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотисене пани

1943 çулхи ноябрĕн пуçламĕшĕнче республикăри медицина работникĕсен канашлăвĕнче Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ З. А. Андреева юлташ халăх сывлăхне сыхлас тĕлĕшпе тунă пархатарлă ĕçсемшĕн наградăланă медицина работникĕсене ЧАССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотисене пачĕ.

Парти активĕн Чăваш республикинчи стационарĕн главнăй врачĕ В. С. Обухов юлташ Чăваш АССР тава тивĕçлĕ врачĕн Хисеплĕ грамотине илчĕ. Ун хыççăн Хисеплĕ грамотăна çак юлташсем илчĕç: Чăвашсен трахоматознăй институчĕн врачĕ-окулисчĕ Н. Н. Алексеев, Шупашкарти ача çуратмалли çуртри акушерка О. Ф. Алексеева, Шупашкар хула совет исполкомĕн сывлăха сыхлав пайĕн заведующийĕ К. А. Арзамасова, Çĕмĕрле хулинчи куç чирĕнчен сыватакан пункт заведующийĕ Л. М. Архангельская, Етĕрне районĕнчи РОКК район комитечĕн председателĕ А. Н. Башкирова, Улатăрти ача-пăча çурчĕн директорĕ Н. П. Березина, Чкаловскинчи больницăн фельдшерици Ш. Ш. Валиуллина, Шупашкар район совет исполкомĕн сывлăха сыхлав пайĕн заведующийĕ П. В. Васильев, Канаш районĕнчи Сиккасси больницин заведующийĕ Т. С. Воробьев, Шупашкар больницин дифтери отделенийĕн заведующийĕ А. И. Воронов, медсантруд Союзĕн Обком председателĕ Л. Т. Грачева, Шупашкар хулинчи иккĕмĕш номерлĕ сĕт кухнин сестри А. Д. Домакова, Çĕмĕрлери ача-пăча çурчĕн заведующийĕ П. С. Дракина, Çĕрпӳ районĕнчи Хурăнсурти фельдшерски пункт заведующийĕ И. Д. Ефимов, Шупашкарти ача-пăча поликлиникин заведующийĕ Ф. П. Засыпкина, Шупашкарти юн илекен станцири санитарка А. И. Иванова, Чăвашсен трахоматознăй институчĕн амбулаторийĕнчи старши медсестра М. И. Ильина, Шупашкар больницин инфекционнăй отделенийĕн фельдшерици А. М. Козлова, Çĕмĕрле больницинче операцисем тунă çĕрте ĕçлекен медсестра В. А. Колесникова, Милютинри механизациленĕ вăрман пунктĕнчи 5-мĕш номерлĕ ача яслин заведующийĕ А. П. Кудрявцева, Челноков юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен заводри медицинăпа санитари чаçĕн начальникĕ В. Г. Кузнецова, Чăваш АССР Сывлăха Сыхлав Халăх Комиссарĕ А. И. Лихачев, Шупашкарти 1-мĕш номерлĕ аптекăри савăтсапа тытакан О. Н. Логинова, Чăваш республикинчи санитарипе эпидеми станцин директорĕ Н. Н. Луппова, пĕр госпитальри отделени начальникĕ М. С. Миролюбова, пĕр госпитальри медсестра К. И. Мочалова, Шупашкар поликлиникинчи хирурги отделенийĕн заведующийĕ П. Ф. Наумов, пĕр госпитальри операцисем тунă çĕрте ĕçлекен сестра Л. И. Николаева, пĕр госпитальри отделени начальникĕ П. П. Николаева, Октябрьскинчи больницăн акушерки О. Н. Николаева, пĕр госпиталĕн хирургĕ И. П. Никоненко, Октябрьски районри Кутемерти трахома чирĕнчен сыватакан пунктри сестра М. С. Павлова, Аптекоуправленин Чăваш республикинчи уйрăмĕн управляющийĕ Б. А. Покровский, Шупашкарти ача çуратакан çуртри санитарка А. Р. Романова, Улатăр райсовет исполкомĕн сывлăха сыхлав пайĕн заведующийĕ А. В. Савельева, пĕр госпиталь начальникĕн политика енĕпе ĕçлекен заместителĕ Е. С. Семенов, Шупашкарти юн илекен станцинчи аслă медсестра С. С. Смирнова, Чăваш республикин судпа медицина эксперчĕ М. Г. Титов, Шăмăршă больницинчи фельдшерица Н. Ф. Уськина, Çĕмĕрле больницинчи хирург М. В. Хоняева, Шалти Ĕçсен Халăх Комиссариачĕн санитари чаçĕн начальникĕ К. И. Широкова, трахоматознăй институт директорĕ А. З. Шульпенкова, Елчĕк районĕнчи госсанинспектор Ю. П. Юнусова.

В. С. Обухов, Н. Н. Алексеев, О. Ф. Алексеева, К. А. Арзамасова, Л. Т. Грачева тата ытти юлташсем сăмахсем тухса каларĕç, вĕсем хăйсен ĕçне çакăн пек пысăка хурса хакланăшăн партипе правительствăна тав турĕç, малашне те халăх сывлăхне упрассишĕн кĕрешнĕ çĕре мĕнпур вăя, пĕлĕве тата опыта пама пулчĕç.

Юлашкинчен Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ З. А. Андреева юлташ наградăна илнисене саламларĕ, малашнехи ĕçре ăнăçусем тума сунчĕ.

Хĕллехи вăрман хатĕрлевне лайăхрах ирттерер!

Эпир, Буинск вăрманпромхозĕн рабочийĕсем, служащийĕсемпе инженерла-техникла работникĕсем, Сталин юлташăн доклачĕпе тата паттăр Хĕрлĕ Çарăн чаплă çĕнтерĕвĕсемпе хавхаланса, нимĕç захвачикĕсене хăвăртрах çапса аркатас шухăш-кăмăлпа çунса тăратпăр. Тăшмана пуçĕпех пĕтерес тесе, эпир кăçалхи кĕркуннепе хĕллехи вăрман хатĕрлевĕсенче татах та ытларах вăй хурса ĕçлĕпĕр. Вăрманти ĕçсене пĕтĕмĕшпех звеносем тăрăх йĕркелĕпĕр. Звеньевсодсем пулма чи лайăх стахановецсене уйăрса лартатпăр. Вăрман хатĕрлес планăн 75 процентне рационализациллĕ инструментсемпе, «Кросс-кот» ятлă тата лучковăй пăчкăсемпе ĕçлесе тултаратпăр.

Вăрманта ĕçлекен рабочисене лайăх ĕç условийĕсем туса паратпăр, вĕсем хушшинче агитациллĕ-массăллă тата культурăллă-массăллă ĕçсене тивĕçлипе йĕркелетпĕр. Лайăх ĕçлекенсен ĕç опытне ыттисем хушшинче саратпăр. Кашни мастерăн участокĕнче, вăрман пунктĕнче тата вăрманпромхозра лайăх рабочисемпе мастерсен ĕçне кăтарту хăмисем çине çыратпăр. Кашни общежитире, вăрман пунктĕнче тата вăрманпромхозра стена хаçачĕсем, боевой листоксем кăларатпăр. Рабочисене çителĕклĕ таранах хăйсен районĕсенчи хаçатсене çырăнса илсе паратпăр.

Вăрманта ĕçлекенсем валли ăшă та таса бараксем хатĕрлерĕмĕр. Кашни баракра, апат пĕçерекен пунктра, столовăйра, клубсемпе хĕрлĕ кĕтессенче умывальниксем, питшăллисем, супăнь тата вĕретнĕ шыв тытатпăр. Эпир хамăр çине çакăн пек обязательствăсем илетпĕр:

1. Чугун çул транспорчĕ валли 1943-мĕш çулхи иккĕмĕш çур çулта вутă хатĕрлесе турттармалли плана декабрĕн 20-мĕшĕ тĕлне тултармалла. 1943-мĕш çулхи вăрман хатĕрлесе турттармалли плана декабрĕн 25-мĕшĕ тĕлне пурнăçа кĕртмелле. Планран ирттерсе Хĕрлĕ Çарăн Главнăй Командованийĕн фондне пама 1.500 кубометр вутă хатĕрлемелле, 1.000 кубометрне турттармалла.

2. Мастерсенчен, малта пыракан рабочисемпе стахановецсем хушшинчен ĕçе сыхлакан тата техника хăрушсăрлăхĕн общественнăй инспекторĕсем 15 çынран кая мар хатĕрлемелле.

3. 1943—1944-мĕш çулсенчи сезонра вăрман хатĕрлемелли плана 1944-мĕш çулхи мартăн 20-мĕшĕ тĕлне пурнăçа кĕртмелле. Чугунçул транспорчĕ валли вутă хатĕрлесе турттармалли плана мартăн 15-мĕшĕ тĕлне, уйрăм панă сортиментсем тăрăх — мартăн 10-мĕшĕ тĕлне тултармалла.

4. Хĕллехи сезонра, иртнĕ çулхипе танлаштарсан, ĕç тухăçлăхне — хатĕрлес енĕпе 8 процент, турттарас енĕпе 5 процент ӳстермелле.

5. Вăрманта ялан ĕçлекен рабочисемпе вăхăтлăха пынă рабочисем хушшинчен мастерсем, бригадирсемпе инструкторсем пулма 25 çынна уйăрса лартмалла.

Вăрманпромхоз директорĕ ВАСИЛЬЕВ, вăрманпромхозри парторг СЕМЕНОВ, рабочком председателĕ МАЛЫШЕВ, Тăвай райсовет исполкомĕн уполномоченнăйĕ АФАНАСЬЕВ, Лесподторг директорĕ ДОННИКОВ, вăрман пункчĕсен начальникĕсем, рабочисемпе стахановецсем, мастерсем.

Сĕнтĕрвăрри районĕнчи колхозсен обязательстви

СЕНТЕРВАРРИ, ноябрĕн 16-мĕшĕ. (Телефонпа). Кунта районри партипе совет тата колхоз активĕн канашлăвĕ пулса иртрĕ. Канашлура чугун çул валли вутă хатĕрлесе турттарас плана тултарасси çинчен сӳтсе-яврĕç.

Канашлу, халăхсен аслă çулпуçĕ Сталин юлташ докладне тата приказне ответлесе, чугун çул валли вутă хатĕрлесе турттарас тĕлĕшпе çакăн пек обязательствăсем йышăнчĕ:

1. Чугун çул валли вутă хатĕрлесе турттармалли çулталăкри плана декабрĕн 15-мĕшĕ тĕлне пĕтĕмпех тултарса çитермелле.

2. Чугун çул валли вутă хатĕрленĕ тата турттарнă çĕрте ĕçлекен кашни колхозник кулленхи ĕç нормине тултарса пымалла.

3. Чугун çул валли вутă хатĕрлесе турттарас тĕлĕшпе колхозсем хушшинче бригадăсем хушшинче социализмлă ăмăртăва вăйлатмалла.

Колхозниксем вăрман хатĕрлевĕнче

КАЛИНИНО. (Хамăр корр.). Районри колхозсем чугун çул валли вутă хатĕрлес тĕлĕшпе Пинер вăрман пунктĕнче ĕçлеççĕ. Çак кунсенче вăрманта ĕçлекенсене Сталин юлташ докладне ăнлантарса пачĕç. Колхозниксем пухусем туса ирттерчĕç. Колхоз фронта пулăшас енĕпе хастарлăн ĕçлеме тĕллев лартнă. Колхозниксем ĕçре çитĕнӳсем тунипе ответлеççĕ.

Алгазинăри колхоз членĕ Е. Прокопьев юлташ малтанах вăхăтра лучковăй пăчкăпа ĕçлесе нормăна 230 процент таран тултарнă. Халĕ вăл 250—300 процент тултарать.

Çавăн пекех Ялтрари колхоз членĕ Ундрицов юлташ нормăна 175 процент тултарнă пулсан, халĕ 200 процент ытла тултарать. Вăрман турттаракансем Павлов, Егоров юлташсем кашни кунах ĕç нормине 120 процент ытла тултараççĕ.

Юлашки вăхăтра вăрманта ĕçлекенсене техника тĕлĕшĕнчен пулăшассине чылаях лайăхлатнă. Участокри мастер Софронов юлташ колхозниксене куллен ĕçре пулăшать тата вĕсем хушшинче культурăллă-массăллă ĕçсе туса пырать.

С. ШАДИН.

Фронтовиксен çемьисене пулăшмалли фонд тăвас тĕлĕшпе иртекен çирĕмкунлăх

Ноябрĕн 10-мĕшĕпе декабрĕн 1-мĕшĕ хушшинче республикăра фронтовиксен çемьисене пулăшмалли фонд тăвас тĕлĕшпе çирĕмкунлăх пырать. Республикăри ĕççынниcем фронтовиксен çемьисене пулăшмалли апат-çимĕç, укçа-тенкĕ тата тумтир фончĕсене тунă çĕре активлăн хутшăнаççĕ. Ку ĕç уйрăмах Сĕнтĕрвăрри районĕнче ăнăçлăн пырать.

Анчах Етĕрне, Элĕк, Ишлей, Кувакино районĕсенче фронтовиксен çемьисене пулăшмалли фонд тăвас ĕç начар пулса пырать. Çак ĕçе организацилессишĕн вырăнти партипе совет тата комсомол организацийĕсем кирлĕ пек çине тăрса ĕçлемеççĕ-ха.

Аялтарахра эпир фронтовиксен çемьисене пулăшмалли фонд тăвас ĕç республикăра мĕнле пулса пыни çинчен районсенчен пĕлтернисене пичетлетпĕр.

Фронтовиксен çемьисемшĕн тăрăшаççĕ

СЕНТЕРВАРРИ, ноябрĕн 16-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри колхозсем фронтовиксен çемьисене пулăшмалли фонда валли тырпул тата ялхуçалăх продукчĕсем параççĕ. Паянхи куна 3 тонна пăрçа, урпа, ыраш тата тулă, 6,5 тонна çĕрулми, 41 килограмм çу, 6 килограмм какай хывнă. Вăл шутран Магач ялсоветĕнчи колхозсем 6,5 тонна çĕрулми, 1.703 килограмм тырă, 4,5 килограмм çу, 6 килограмм какай, 10 килограмм сухан панă.

К. ВОЙКОВА.

Янчеллă колхозникĕсенчен пример илĕр

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. (Телефонпа, хамăр корр.). Янчеллă ялсоветĕнчи колхозсенче фронтовиксен çемьисене пулăшмалли фонд турĕç. Çав фонд валли 14 центнер тырă, 10 килограмм çу уйăрса хунă. Кунсăр пуçне фронтовиксен 6 çемьи валли 100 кубометр вутă турттарса панă. «Прогресс» колхоз (председателĕ Ефремов юлташ) 4 центнер тырă, 5 килограмм çу уйăрса хунă. «Новая жизнь» колхоз 5 центнер тырă, 5 килограмм çу уйăрнă. Ку ĕç районри пур колхозсенче те пулса пырать.

Икĕ кун хушшинче

ОКТЯБРЬСКОЕ, ноябрĕн 16-мĕшĕ. (Телефонпа). Фронтовиксен çемьисене пулăшмалли фонд тăвас ыйтăва ВКП(б) райкомĕн ларăвĕнче сӳтсе яврăмăр. Ку ĕçе организацилеме районра комисси турăмăр, çавăн пекех ялсенче те комиссисем организацилерĕмĕр. Районри партипе совет тата комсомол активне колхозсене кăларса ятăмăр. Вĕсем колхозниксемпе колхозницăсене Сталин юлташăн кăçалхи ноябрĕн 6-мĕшĕнче тунă историллĕ доклачĕпе приказне анлăн ăнлантарса пачĕç. Çав вăхăтрах фронтовиксен çемьисене пулăшмалли фонд тăвас ĕçе те организацилерĕç.

Икĕ кун хушшинче фронтовиксен çемьисене пулăшмалли фонд валли колхозсем 56,5 центнер çăнăх, 10,5 центнер кĕрпе йышши культурăсем, 92 центнер çĕрулми, 2 центнера яхăн сухан, 620 килограмм купăста, 122 килограмм çу, 50 килограмм пыл пухнă.

Ку ĕçе уйрăмах «Социализм» колхоз лайăх йĕркеленĕ. Унта 3 центнер çăнăх, 5 центнер çĕрулми, 7 килограмм çу, 5 килограмм пыл пухнă. Çавăн пекех Ускасси ялсовечĕ те (ялсовет исполкомĕн председателĕ Шиверов юлташ) фронтовиксен çемьисене пулăшмалли фонд турĕ.

Ку ĕçе эпир малашне татах та вăйлататпăр. Фронтовиксен çемьисене пулăшмалли фонда тунă çĕре колхозсене çеç мар, колхозниксемпе колхозницăсене, район центрĕнчи ĕççынниcене те явăçтаратпăр.

Г. АЛЕКСЕЕВ,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

6 боецăн ашшĕ

СОВЕТСКОЕ. Шарпашри «Искра» колхоз членĕ С. Васильев, 60 çулган иртнĕскер, Отечественнăй вăрçă пуçланнăранпа 6 ывăлне Хĕрлĕ Çара ăсатрĕ. Вăл ывăлĕсенчен çырусем илсех тăрать. Отечественнăй вăрçăн анлă хирĕсенчи Хĕрлĕ Çарăн калама çук пысăк çĕнтерĕвĕсемпе хавасланса, вăл ырми-канми ĕçлет, ĕçлесе фронта пулăшать. Колхоз производствинче ĕçлесе, вăл кăçал 150 ĕçкунĕ ытла тунă.

М. СТЕПАНОВА.

«Отелло» трагедин 3-мĕш актĕн чи сцена — «Тупа туни».

ТЕАТР

„Отелло"

(В. Шекспир. Чăвашла А. Кăлкан куçарнă)

Чăвашсен Государство Академи театрĕ кăçалхи сезона акăлчан драматургĕ Вильям Шекспир çырнă «Отелло» трагедипе уçрĕ.

«Отелло» — Шекспирăн чи лайăх трагедийĕсенчен пĕри. Чăвашсен Государство Академи театрĕн коллективĕ «Отеллона» хăюллăн хăйĕн репертуарне кĕртсе пысăк утăм турĕ.

«Отелло» спектаклĕ (ăна паракансем ЧГАТ-ăн художествăллă руководителĕ Л. Н. Родионов, режиссерĕ Г. А. Моров) чăвашсен театр искусстви ӳссе аталаннине, театрăн пысăк вăйсем пуррине, театр малашне те классиксен пысăк произведенийĕсем çинче ĕçлеме пултарнине яр-уççăн кăтартса пачĕ.

«Отелло» — чăваш театрĕн чи ăнăçлă спектаклĕсенчен пĕри тесен те йăнăш пулмасть. Спектакльре чылай артистсем хăйсен халиччен палăрман пултарулăхĕсене вăйлăн кăтартрĕç. Уйрăмах Чăваш АССР тава тивĕçлĕ артисчĕ И. О. Молодов (Отелло), ЧАССР халăх артисчĕ Б. А. Алексеев (Яго) килĕшӳллĕ те пултаруллă выляççĕ.

Спектакле вĕçне çитиччен пысăк интереспа пăхатăн. Унти геройсене — чи малтанах Отеллопа Дездемона çине пĕр савăнса, пĕр хуйхăрса пăхатăн. Ягона — пĕтĕм чĕререн курайманăр, тарăхса пăхса ларатăн.

Малтанхи сценăранах Отелло (И. О. Молодов) куракансене хăй енне çавăрса илет: вăл çемçереххĕн те васкамасăр калаçнисем, тинкерсе пăхни, утнисем — пите килĕшӳллĕ. Акă вăл сенат умĕнче хăйĕн таса юратăвĕ çинчен каласа парать: Çепĕç те хумханулла сасă, çын пĕрне пайăн кĕнĕ вăхăтри пек тилмĕрсе, хăйĕн юратăвне ăнланса илме [illegible] Акă Отелло юратнă Дездемона çине ытарайми йăвашшăн та тарăннăн пăхать. Вăл [illegible] сăмахĕсене çирĕплетнине илтсен тата сенат ăна ăнланнине пĕлсен, Отелло калама çук савăнать.

Отелло — хастарлă çар çынни, мавр, Дездемонăна вĕçĕмсĕр юратать. Унăн пĕтĕм савăнăçĕ, телейĕ, пурнăçĕ те — Дездемонăра. Унра — тасалăх, тĕрĕслĕх. Анчах ăна хăйĕн прапорщикĕ, чее те икĕ питлĕ Яго улталать. Çавăн хыççăн вăл кĕвĕçме пуçлать.

Отелло Дездемонăна шанать, Ягона ĕненмест. Яго (Б. А. Алексеев) çавăнпа Отеллона кĕвĕçтерме тĕрлĕ майсем шырать. Отелло часах хăйĕн заместительне чипер те кăмăллă Кассиона вырăнтан кăларать, Дездемона Кассиона каялла илме упăшкине йăлăнать. Çакăнпа усă курса, Яго Дездемонăпа Кассио хушшинче ырах мар япала пурри çинчен Отеллона пĕлтерет; хăй, Отеллошăн пулсан, тем тума та хатĕрри çинчен шантарать.

Отелло кĕвĕçме пуçлать, хăйне хăй ятлать. Яго унăн патĕнчех çавăрăнса çӳрет. Отеллона хĕрхененçи, лăплантаранçи пулать. Отелло халĕ пĕтĕмпех Яго аллинче.

Çак чăн-чăн пурнăçри пек туйăнакан сценăсенче РСФСР тава тивĕçлĕ артисчĕ Б. А. Алексеев пысăк мастерлăхпа вылять, вăл сценăри пурнăçпа пурăнать.

Отелло Ягона хытă шанма пуçлать. Халĕ ăна юрату тасалăхĕ, пурнăçăн пĕтĕм хакĕ те — йăлтах пĕтнĕн туйăнаççĕ. Çавăнпа вăл хăйĕн паттăр çарĕсемпе, лашипе, хăйĕн пурнăçĕпе сывпуллашать. Отеллăна йывăр, унăн чĕри ыратать. Хăйне малтан тем пекех паттăр та çирĕп тытаканскер, çемçелсе, юлашкинчен хăйĕн чаплă хĕçне те çĕр çине тăрăнтарса хăварать. Çак картинăна пĕтĕм чун-чĕрепе хумханмасăр нимепле те пăхаймастăн.

Отелло тĕрĕслĕх шырать. Дездемонăна вăл çаплипех юрататъ-ха, ăна хĕрхенет, — ытла та тасаччĕ, ытла та çепĕçчĕ, хитреччĕ-çке Дездемона! Анчах халĕ унта, Дездемонăра, ултавлăх. Отелло Дездемонăна куçран шăтарасла пăхать, — ултавлăх курăнмасть. Отелло тулашать. Анчах Дездемона вилмех тивĕç!

Отелло Дездемона çывăрнă çĕре сурта йатса ăна вĕлерме кĕрет. Тискеррĕн туйăнать Отелло. Дездемона патне пырса, ăна юлашки хут ытарайми юратса нумайччен чуптăвать, кăмăлĕ хуçăлнипе макăрса ярать. Дездемонăн таса ӳтне юнпа варалас килмест унăн. Анчах вĕлермелле: мавр чунĕ — суялăха, ултавлăха хирĕç. Дездемонăна вĕлерни сценăна пăхма питех те йывăр.

Эмилия (арт. Тани-Юн) ăна Яго улталани çинчен пĕлтерсен, Отелло ним тума аптăраса, хумханса ӳкет. Отелло вара темĕн чухлĕ куççуль тăкать, çав куççулĕ унăн аманнă чĕрине çăмăллатать. Отелло хăй мĕн тунине виççе, тĕрĕслесе пăхайманнипе йăнăшнă. Кайран çакна вăл хăй те ăнланать. Отелло хăйне хăй чиксе пăрахнă сценăра та Чăваш АССР тава тивĕçлĕ артисчĕ И. О. Молодов пултаруллă та ăста, ӳсекен артист пулнине кăтартпăр.

Яго — çын чĕрине витĕр куракан, хăйшĕн тăрăшса темĕнле ирсĕр ĕçсем те тума ăс çитерекен, чее те икĕ питлĕ çын. Вăл — нумай енлĕ образ. Ăна драмăри геройсем пурте юлашки картинăна çитиччен тĕрĕс те тӳрĕ чĕреллĕ çын вырăнне шутлаççĕ, вăл ултавлине хăйсĕр пуçне урăх никам та, çав шутрах арăмĕ те, пĕлмест. Вăл кирек кам умĕнче те хăйне хăй тыткалама пĕлет, Отелло умĕнче вăл — салтак, Кассиошăн — тантăш. Родригăшăн — хăех генерал. Унăн сăмахĕсем уçă, ĕненмелле, утни-кулни килĕшӳллĕ.

Р. И. Ананьева артистка ку спектакльре вылянă пек «Чаккара» та, «Нарспире» те тата ытти спектакльсенче те вылямасн-ха. Вăл пысăк утăм тунă. Уйрăмах юлашки сценă ĕнентерӳллĕ. Анчах пирвайхи сценăсенче юрату хавхаланăвĕ, хаваслăх çитеймест, Кассиона каялла илме тата хăйне вĕлерессинчен хăтарма тархасланă чухнехи сценăсенче Дездемонăн çирĕппрех те хастартарах пулни кирлĕ. Калаçăва та лайăхлатмалла, хăшпĕр сăмахсене вăраммăн, кирлĕ мар çĕртех ачашшăн тăсса калани — сăмахсен хакне йӳнетет.

Кассио (Чăваш АССР тава тивĕçлĕ артисчĕ А. К. Ургалкин), Монтано (артист Г. Ф. Фадеев), Лодовико (артист П. Д. Дмитриев) хăйсен образĕсене ĕненмелле тунă, кăмăллă выляççĕ. Кассиопа Монтано калаçни, тĕрлĕ хусканусем туни питех те вырăнлă. Фадеевпа Ургалкин артистсен вăййине, ытти спектакльсенчи пекех, куракансем юратса пăхаççĕ. Эмилия (артистка Тани-Юн) вырăнĕ-вырăнĕпе аван вылять, анчах тĕл-тĕл ытла та шари кăшкăрса пăрахни, пĕр кăмăл хусканăвĕнчен теприн кăмăл хусканăвĕ патне хăварт, сисĕнмелле куçни (Дездемонăна вĕлернĕ тата Кассиона амантнă картинăсенче) образ хакне чылаях чакарать.

Малтанах каларăмăр, Чăвашсен Государство Академи театрĕ «Отеллона» лартса хăйĕн лайăх ĕçне кăтартрĕ. Анчах спектакльре çитменлĕхсем те юлнă. Чи малтанах хăшпĕр артистсен чĕлхе шăйрăкĕсене, унтан вара Архангельский художник тунă декораци чухăнраххине, Г. Лисков композитор хатĕрленĕ музыка оформленийĕ çителĕксĕртереххине палăртса хăвармалла. Отеллопа Дездемонăн костюмĕсем питех те чухăн. Сцена работникĕсен декорацисене хăвăртрах кĕскерех вăхăтра улăштарса тăмалла. Çак çитменлĕхсене пĕтерни «Отелло» спектакле татах та лайăхлатма пулăшĕ.

П. НИКОЛАЕВ.

Ют çĕршывсенче

РУМЫНИРЕ ПАШАРХАНАÇÇĔ

СТАМБУЛ, ноябрĕн 13-мĕшĕ (ТАСС). Германи çарĕсем поражени тӳсни Румынири халăха питĕ пăшăрхантарать.

«Порунка времий» ятлă хаçат çапла çырать: «Лару-тăру пăшăрхантарать. Российăри компанире пирĕншĕн романтикăллă вăхăт иртрĕ. Халĕ ĕнтĕ лару-тăрăва тивĕçлипе хаклама вăхăт çитрĕ... Совет çарĕсем июль уйăхĕнчен пуçласа вăйлăн малалла тапăнса пыраççĕ. Анчах июль уйăхĕнчен пуçласа çеç-и! Тĕрĕссипе илсен, совет çарĕсем хăйсем анлăн тапăнса пырассине иртнĕ хĕлле Сталинград патĕнче тата Дон шывĕ çинче пуçласа ячĕç, унăн результачĕсем куç умĕнчех ĕнтĕ. Румынсем картта çине пăхаççĕ те чĕтресе ӳкеççĕ».

«Çĕршывра, — тесе çырать «Тимпул» ятлă хаçат, — эпидеми сарăлнă чухнехи пекех: трамвайсенче, урамра, клубсенче, кафэре, хăйсен килĕсенче, пур çĕрте те вăрçă стратегийĕ çинчен çеç калаçаççĕ».

Халăха мĕнле те пулин йăпатас, çирĕпрех шухăш-кăмăл парас тесе, хаçатсем гитлерла пропагандăн халăха култаракан «эластичная оборона», «фронт линине кĕскетмелле» текен тахçанах юрăхсăра тухнă сăмахĕсемпе усă кураççĕ. Çӳлте асăннă «Порунка времий» ятлă хаçат халăх шухăш-кăмăлне «эпир тататкăллă катастрофăна кĕрсе ӳкмен-ха» тесе хавхалантарма тăрăшать.

Анчах çакăн пек хавхалантарнине халăх ĕненмест. Турцире тухакан «Тан» хаçат Румыни халăхĕ хушшинчи пачикăллă шухăш-кăмăл Хĕрлĕ Çар Днепр урлă каçнă хыççăн татах питĕ вăйлăн ӳсни çинчен пĕлтерет.

БРЮССЕЛЬРЕ — ГИТЛЕРЛА ТЕРРОР

ЛОНДОН, ноябрĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Бельги правительстви Лондонра çапла пĕлтернĕ: Брюссельре Германие хирĕçле выступленисем йышланнă пирки унта Гиммлер пынă. Хулара, çуртсене çавăрса илсе, темиçе çĕр бельгиеца арестленĕ.

СОЮЗНИКСЕН АВИАЦИЙĔ СОФИЕ ТАПАННИ

ЛОНДОН, ноябрĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Çурçĕр Африкăри çарĕсен штабĕ çапла пĕлтерет: ноябрĕн 14-мĕшĕнче вăтам бомбардировщиксем (вĕсене истребительсем хӳтĕлесе пынă) Софири чугун çул объекчĕсене тапăннă. Бомбăсем нумай пăрахнă. Бомбăсем тӳрех лекнине асăрханă.

КĔСКЕН

● Бадольо правительстви Франци флотне «Тигр» эсминеца тавăрса панă. Ку ĕнтĕ Италия Франци флотне тавăрса паракан иккĕмĕш çар судни пулса тăрать. Пĕррĕмĕшĕ — «Тромб» эсминец пулнă.

● Юлашки 10 кун хушшинче Тулуза, Бордо, Дижон, Рейн, Пуатье, Лилль, Гренобль, Монпелье тата Лион хулисенче француз патриочĕсене 1000 çынна тытса хупнă.

Лондон хулин лорд-мэрĕ патĕнчи банкетра Черчилль сăмах тухса калани

Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: Черчилль Лондон хулин лорд-мэрĕ тунă банкетра сăмах тухса каланă.

«Эпир кунта юлашки хут пухăннăранпа çулталăк хушшинче эпир тата пирĕн союзниксем пур фронтсенче те çĕнтерӳ хыççăн çĕнтерӳ туса пытăмăр», — тенĕ Черчилль. Англипе унăн доминионĕсем тата Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсем çак вăрçăра мĕн чухлĕ вăй хунине палăртса, Черчилль малалла çапла каланă: эпĕ çапла калатăп (çапла калама тата мана питĕ хавас): çак чаплă çулталăкра пулнă питĕ пысăк ĕç вăл — вырăс çарĕ Атăл шывĕ патĕнчен Хĕвеланăçнелле наступлени туса пырса, Днепр шывĕ урлă каçса кайни пулчĕ. Çав наступление пула, Маршал Сталин каланă тăрăх, нимĕç захватчикĕнчен вăл оккупациленĕ вырăс çĕрĕн виçĕ пайĕнчен икĕ пайне каялла туртса илнĕ. Наступлени туса, совет çарĕсем Германин пурнăç никĕсне тата çар хăватне калама çук вăйлăн пырса çапрĕç. Германин хăвачĕпе тиранине çапса çĕмĕрнĕ, вырăс паттăрлăхĕ, командованин ăсталăхĕ тата ăслăлăх çапăçура, маневрсенче тăшманăннинчен иртнерĕ, кам пĕлет, тăшмана вĕлермеллех те пырса çапнă пуль. Хамăр çарсене тивĕçсем, океансем урлă илсе кайса, вĕсене тăшмана хирĕç вăрçа кĕртсе ярас тĕлĕшпе эпир тата пирĕн союзниксем мĕн тума май пуррине пурне те тăвĕç. Англипе Америка сывлăшра Германие хирĕç тăвакан вăрçă гитлерла режим арканнăçемĕн арканса пынин тĕп сăлтавĕсенчен пĕри пулса тăрать тесе шутлатăп эпĕ. Анчах ак çакна нихăçан та манма юрамасть: Россия пырса çапнă пек пырса çапмасăр е вăл тӳснĕ çухатусене тӳсме пултаракан çар организацийĕ халиччен пĕтĕм тĕнчипе те пулман, пулма та пултарайман. Кунта, Лондонра, хамăр праçникре, эпир совет войскисене тата Сталин Маршала саламлатпăр».

Мускаври конференци çинчен Черчилль çапла каланă:

«Мускаври конференцин результачĕсемпе эпир пурте савăнатпăр». «Çакăн пирки иккĕленмелли çук, — тенĕ вăл: — ют çĕршыв ĕçĕсен виçĕ министрĕ пĕр-пĕринпе уççăн та тăтăклăн калаçни пирĕн вырăс туссене ак çакна халиччен хинчен нумай ытларах ĕненме май пачĕ: Британипе Америка халăхĕсем çак вăрçа совет халăхĕпе союзлă пулса вĕçлесшĕн, вăрçă хыççăн вара Совет Союзĕпе пĕрле, пĕр-пĕрне хисеплес тата пĕр-пĕринпе юлташлă пулас йĕркепе ĕçлесе, çак асап курса пĕтнĕ тĕнчене çĕнетсе урăхлатасшăн. Виçĕ правительствăн руководителĕсем хăçан та пулсан пĕр-пĕринпе тĕл пулса калаçма пултарассине эпĕ халĕ те ĕненетĕп, мĕншĕн тесессĕн çак вăрçăра опыт мана çакна кăтартса пачĕ: ответлă руководительсем пĕр-пĕринпе туслăн та пĕр-пĕрне шанса ĕçлени вăрçă планĕсемпе мир планĕсене тумалли чи лайăх никĕс пулса тăрать».

Çак вăрçă хăçанччен пырасси çинчен Черчилль çапла каланă:

«Эпир хамăр плансемпе ĕçсене Германи часах пĕтсе ларассине шанса туса пырас пулсан, пире ятламалла пулнă пулăччĕ».

«Эпĕ хам çапла шутлатăп, — тенĕ Черчилль: — 1944-мĕш çулхи кампани Европăри чи йывăр кампани пулмалла, Хĕвеланăçĕнчи союзниксемшĕн вăл хальхинчен нумай ытларах жертвăсем ыйтакан кампани пулĕ». (ТАСС)

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Пур охотниксене те çакăн çинчен пĕлтерет пĕр:
Чăваш АССР Совнаркомĕ кăçалхи октябрĕн 15-мĕшĕнче йышăннă 1374-мĕш №-лĕ постановлени тăрăх, 1943 — 44 çулхи ухута сезонĕ çак ноябрь уйăхĕн 1-мĕш числинче пуçланчĕ, çав числаран пуçласа шурă тата хура пăкăра, шурă мулкачăпа русак мулкача тата тилĕ тытма юрать, сăсарсене çак ноябрь уйăхĕн 15-мĕшĕнчен пуçласа тытма ирĕк панă.
Охотниксене е кайăк тирне пырса паракансене çав панă тирсемшĕн укçасăр пуçне кашни пĕр тенкĕ пуçне çакăн пек таварсем параççĕ:
1) мамăклă тир тĕлĕшпе: 80 грамм çăнăх, 4 грамм кĕрпе тата 22 пуслăх эрех; кс. сăсар, кăсара тирĕсем тĕлĕшпе кашни пĕр тенкĕ пуçне 100 грамм çăнăх, 6 грамм кĕрпе тата 33 пуслăх эрех;
2) колхоз фермисенче ӳстерсе çитĕнтернĕ кайăксемпе кролик тирĕсемшĕн малта асăннă мамăклă тир тĕлĕшпе тунă тĕл нормăн 20 процентчĕ чухлĕ параççĕ.
3) тир тумалли чĕртавар тĕлĕшпе кашни пĕр тенкĕ пуçне 3 грамм супăнь тата 30 пуслăх эрех.
Охотниксем, мамăклă тир пама хуçалăх договорĕсем тăвăр, мамăклă тирсене тата тир тумалли чĕртавара районсенчи хатĕрлев конторисене, ларексене тата „Заготживсырье" агенчĕсене парăр.
„Заготживсырьен" республикăри конторин адресĕ çапла: гор Чебоксары, ул. Ленина, 31.
„ЗАГОТЖИВСЫРЬЕН" ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИНЧИ КОНТОРИ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕн—5—31, издательство конторин—0—23

НТ 1874 Типография №1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 Ф. б. 53 84 п. л.